Иванов сассипе янкăрах шуçăмланчĕ

Пирĕн сăвă тĕнчи терт-хĕнре

Чăвашри сăвăçсен кĕреки пуянланчĕ,

Ивановăмăр халь те - тĕпре.

Я. Ухсай

Чăваш юрри-сăввин ăсти Константин Васильевич Иванов çуралнăранпа çĕр çирĕм пилĕк çул çитнине уявласа икĕ пин те вун пиллĕкмĕш çулхи çу уйăхĕнче Атăлпа Урал тăрăхĕнче шăхлич-шăпăр сасси янăраса тăчĕ. Çак пĕлтерĕшлĕ уяв тĕнчери кашни чăваш çыннинех пырса тиврĕ. Константин Иванов ытарайми произведенисем шăрçаласа чăваш халăхĕпе литературине тĕнче шайне çĕкленĕ.

Константин Васильевич Иванов историк, поэт, драматург, куçаруçă, прозаик, фольклорист, ӳнерçĕ, çĕнĕ чăваш литературин никĕслевçи шутланать. Унăн пултаруллăхĕ - пĕтĕм тĕнче культурин пуянлăхĕпе пĕр тан.

Икĕ пин те вун пиллĕкмĕш çул Раççейре литература çулĕ тесе паллăртнă. Чăваш Республикинче вара пуçлăхĕн указĕпе икĕ пин те вун пиллĕкмĕш çула Константин Васильевич Иванов çулталăкĕ тесе йышăннă.

Константин Иванов! Нарспи! Пĕтĕм тĕнче пĕлекен ятсем! Кăçал пĕтĕм чăваш халăхĕ поэт çуралнăранпа çĕр çирĕм пилĕк çул çитнине анлăн паллă турĕ. Слакпуç... Çак çĕр, Слак шывĕн пуçламăшĕ, чăннипе те сăваплă вырăнсенчен пĕри пулса тăчĕ. Мĕншĕн тетĕр-и? Мĕншĕн тесен вăл çут тĕнчене икĕ тĕлĕнмелле пултаруллă çын çуратса çитĕнтернĕ. Пĕри вĕсенчен, паллах,чăваш поэзийĕн классикĕ Константин Васильевич Иванов, тепри – чăваш халăх поэчĕ – Яков Гавриллович Ухсай. Слакпуç ялĕ Пушкăртстанри чи илемлĕ вырăнта вырнаçнă.

Слакпуç ялĕнче чаплă поэтăмăрăн çавра юбилейне уявлама пирĕн хулари Иван Яковлев ячĕллĕ ачасен пултаруллĕхне аталантаракан центр вĕрнтекенĕсем мана фотокореспондент пулса пыма чĕнсен, питĕ хĕпĕртерĕм. Эпĕ кĕçĕн классенче вĕреннĕ чухнех Слакпуç валакĕсене хам куçпа курма, Ивановăн музейне кĕрсе тухма ĕмĕтленеттĕм.

Акă кĕтнĕ кун та килсе çитрĕ. Эпĕ ирех тăтăм, хитре кĕпене тăхăнтăм, фотоаппарат тата камера илтĕм те автобус çине ларса Слакпуçне вĕçтертĕмĕр.

Слакпуç ялне килсе çитрĕмĕр. Слакпуçне кĕнĕ самантра мана Аркадий Русаковăн сăвви аса килчĕ:

Кĕçтинтин Иванов ялĕнче
Ирлĕ-каçлă куккук авăтать,
Çĕмĕрт, хурăн, вăрманлă тĕнче,
Сăвăç утнă çула астăвать.

Слакпуç ялĕ чăн та илемлĕ те тĕлĕнмелли асамлă юмахри пек вырăнта ларать. Çӳллĕ ту тăрринчех çăлкуççем тапаса тухаççĕ. Вĕсен кĕленче пекех тăп-тăрă шывĕ çĕршер çул хускалмасăр выртакан чулсем хушшипе çĕлен пек авкалана-авкалана валак çинчен валак çине шăнкăртатса юхать. Çак валаксем халь те куç умĕнчех, хăлхара вара шыв шăнкăртатни илтĕнет. Шывне те тутанса пăхма сĕнчĕç: тутлă, сивĕ, çан-çурăма çӳçентерсе илет, ăша кантарать. Ку ялта ĕçчен те ырă кăмăллă халăх пурăнать. Вăл çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен килекен хăнасене ырă сунса кĕтсе илме пĕлнипе палăрса тăрать.

Пире те ырă сунса çăкăр-тăварпа кĕтсе илчĕç. Унта пур çĕрте те йĕрке, тасалăх хуçаланатчĕ. Слакпуç ялĕ - йăмралă ял. Акă Ивановсен çурчĕ. Кунта поэт ачалăхĕпе çамрăклăхне ирттернĕ. Халĕ вăл çурт-музей пулса тăнă. Музей умĕнчи пысăк йăмра хăйĕн çулçисемпе алă çупнă евĕр шавласа пирĕнпе паллашрĕ. Ăна поэт пин те тăхăрçĕр çиччĕмĕш çулта хăй аллипе лартнă.

Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесĕнчен шутсăр нумай автобус килсе тулнăччĕ çав кун Слакпуçне. Эпир автобусран антăмăр, вара эпĕ хамăн алла фотоаппарат тытрăм та ĕçе пикентĕм. Çав самантра пирĕн пата Чăваш республикинчен килнĕ „Чăваш ен“ радиокореспонденчĕ пырса тăчĕ. Пĕр-пĕрне ыр сунса паллашнă хыççăн манран интервью илме килĕшӳ ыйтрĕ. Эпĕ хальчен пĕр те ун пек лару-тăрура пулманскер хумхансах кайрăм, анчах килĕшрĕм. „Нарспи“ поэмăри „Сарă хĕр“ сыпăка каласа патăм.

Уяв иртекен вырăнта чăн-чăн ярмарка пек суту- илӳ йĕркеленĕ, чăваш орнаменчесемпе илемлетнĕ сцена тата юртăсем лартнă иккен. Кашни хăнана кăпăклă чăваш сăрипе тата тутлă пушкăрт кăмăсĕпе кĕтсе илеççĕ. Эпĕ хама

валли чăваш писателĕсемпе поэчĕсен кĕнекисене, анне валли - чăваш тĕррине, аттене – чăваш юрăçисен ауди дискĕсене, шăллăма вара пĕчĕк сувенирсем туянтăм.

Малтан эпир Ивановăн музей-çуртне кĕрсе куртăмăр, ун хыççăн поэтăн палăкĕ патне çитсе чечексем хутăмăр. Кайран вара концерт пăхма саксем çине вырнаçрăмăр.Уяв йĕрки тăрăх концерта Слакпуç ял хуçалăх пуçлăхĕ уçрĕ, килнĕ хăнасем те сăмах тухса каларĕç. Константин Ивановăн произведенийĕсене çитмĕле яхăн чĕлхене куçарнă, вĕсен шутĕнче пушкăрт чĕлхине те. „Нарспи“ поэмăна пушкăрт чĕлхине куçараканĕсенчен пĕри вăл-пушкăрт халăх поэчĕ Мустай Карим. Чĕннĕ хăнасем хушшинче унăн хĕрĕпе ывăлĕ те сăмах каларĕç.

Акă шăпăр сасси янăраса кайрĕ - чăваш халăх инструменчĕ. Мĕнле хитре, çепĕç илтĕнет! Малалла сцена çине тĕрлĕ çĕртен çитнĕ фольклор коллективăсем, юрăçсем, писательсем хăпара-хăпара хăйсен юрри-ташшисемпе, сăввисемпе халăха савăнтарчĕç. Пирĕн хулари „Хĕрсем“ юрă коллективĕ те илемлĕ юрă шăрантарчĕ. Эпĕ вара Аркадий Русаковăн „Слакпуç таврашĕнче“ сăввине каласа патăм. Çавăн пек сисĕнмесĕр иртсе кайрĕ вăхăт. Вăйă-кулă каçченех тăсăлнă пулĕ, анчах эпир уяв вĕçлениченех тăраймарăмăр, тулли кăмăлпа инçе çула тухрăмăр.

Хамăн репортажа вĕçленĕ май манăн çакна калас килет: мана питĕ килĕшрĕ çак уяв.Çулсерен вăл татах вăйлăланса чечекленсе, чăваш халăхĕн ĕçченлĕхне тата туслăхне çирĕплетсе пытăр. Чăтаймасăр тепĕр çула кĕтетĕп, çак уява хамăн туссемпе пĕрле çитес çул та кайса курма ĕмĕтленетĕп.

Киле таврăнсан „Нарспи“ поэмăна тепĕр хут вуласа тухрăм. Кĕмĕл шăнкăрав сасси пек юхать Константин Иванов сăвви. Сăввин кашни сăмахĕ илемлĕ, уçă вырăнлă, чуна илĕртет. Акă пăхăр-ха Нарспи сăнарне. Мĕнлерех хитре сăмахпа сăнласа кăтартать ăна поэт „Сарă хĕр“ сыпăкра!

Ешĕл курăк хушшинче,
Сап-сарă чечек ÿсет,
Аслă Сильпи ялĕнче
Нарспи ятлă хĕр ÿсет.

Пичĕ-куçĕ пит хӳхĕм,
Хирти сарă чечек пек,
Икĕ куçĕ хуп-хура,
Икĕ хура шăрçа пек.

„Нарспи“ поэма ĕмĕр ытла ĕнтĕ вулакан чĕринчен тухма пĕлмест, вăл халăх чунне, шухăш-кăмăлне ытларах та ытларах витерет. Мĕншĕн „Нарспие“ кашниех юратса вулать-ха? Мĕншĕн тесен Константин Иванов çырнă „Нарспие“ пурнăç çуратнă, вăл пурнăç уттипе аталаннă, халĕ те пурнăçпа пĕрле утать. „Нарспи“ поэма – чăваш поэзи çĕр-шывĕн çăл куçĕ, унăн шывне тутанса пăхакан вăй илет, çамрăкланать. Поэмăра халăх пурнăçне, кăмăл-сипетпе илемлĕх ыйтăвĕсене таräннăн хускатнă. Эпир унта Нарспипе Сетнерĕн чун-чĕре пуянлăхне куратпăр, çутçанталăк пулăмĕсене анлăн çырса кăтартнине те асăрхатпăр.

Вун çичĕ çулхи автор вилĕмсĕр чаплă произведени çырнинчен тĕлĕнмеллипех тĕлĕнетĕп. Мĕн тери пысăк та таса юратупа юратаççĕ Нарспипе Сетнер. Ирĕксĕрех шухăша каятăп – эпир паянхи çамрăксем хамăрăн юратăва упрама пĕлместпĕр, уншăн кĕрешместпĕр, тĕрлĕ суя сăмахсене итлесе таса туйăмсене аркататпăр, хальхи вăхăтри ултавлă илĕртӳсене парăнатпăр. Хам пекех çамрăксене чĕнсе калас килет: чунра çуралнă таса та çутă юрату туйăмне упрама тăрăшăр, „Нарспи“поэма вара пирĕншĕн тĕслĕх пултăр!

Икĕ савни çут çăлтăра
Ӳксе çухалчĕ тӳперен.
Çак вилĕмсĕр ик сăнара
Пĕлмен çын çук халь тĕнчере.
Çĕн Нарсписем те Сетнерсем
Ӳсеççĕ пирĕн хушăра.
Вĕсен те çутă ĕмĕтсем,
Анчах та такăр çул умра.
Халь Иванов поэмине
Пăхаççĕ тĕрлĕ хак пама,

Текех хурлаççĕ Нарспие,
Пуçлаççĕ çылăх шутлама.
Анчах Нарспи пулман пулсан
Аталану та пулас çук.
Калатăп çирĕппĕн ялан-
Нарспи вилмен те, вилес çук.
Хĕвел çинче те пăнчăсем
Курма пулать теç ăсчахсем.
Çут Шанчăк, Юрату пуртан
Эпир те пур-тăр, чăвашсем!




Мелеуз хулинчи „"Хĕрсем" юрă коллективĕ, çу уйăхĕ 2015ç., Слакпуç